Мерчен С. Эсĕ пирĕнпе: [сăвă] / Сергей Мерчен // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 11 юпа.

# К. В. ИВАНОВА АСĂНСА

## ЭС ПИРĔНПЕ...

Эс халăха чунтан юратнă,
Ун хăватне шанса тăрса
Чи уçă юрăсем шăратнă,
Хуйха-суйха сирсе ярса.

Эс курнă мĕскĕн чăвашсем
Хирте йĕрсе ĕçленине,
Эс курнă чĕн саламатсем
Хресчен юнпе юнланнине.

Вара, çакна йăлт курнăскер,
Асаплă пурăнăç çинчен
Хĕç пек касса йĕрленĕ эсĕ
Чăн сăмахсем шур хут çине.

Поэт, поэт! курман эс ырлăх,
Шав хурлăх тăнă умăнта.
Сана валли пулман пĕр вырăн
Кăмăл уçма та савăнма.

Çул хыççăн çул хĕвел пек шурĕ,
Октябрь çăлчĕ пусмăртан.
Çĕршывăн хирĕ, шывĕ-шурĕ
Пĕтĕмĕшпех халь хамăрта.

Поэт, поэт! халь халăху
Мĕнпур пек ăшă кăмăлтан
Ятна çĕклерĕ те мухтавлăн
Каларĕ: «Вăл пулнă, пулĕ ман!»

Эс пирĕнпех, тăван поэт.
Çак ырă, тулăх пурнăçра
Сан вилĕмсĕр сăввусене
Халăх янратĕ уççăнрах.

СЕРГЕЙ МЕРЧЕН.